24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 28 ЮНКУН 23 (6048) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас хăвăртлăха ÿстерни кирлĕ

Çураки вăхăтĕнчи задачăсем кăçалхи çул пĕлтĕрхипе танлаштарсан нумай пысăкланаççĕ. Тĕштырăсем тата ытти культурăсемпе пахча-çимĕçсем акмалли çĕр лаптăкĕ кăçал пирĕн республикăра пĕлтĕрхинчен 47 пин гектар ытларах пулмалла. Уйрăмăнах кăçалхи çул пирĕн йĕтĕн-кантăр, кĕрпе тумалли тырăсем тата пахча-çимĕçсемпе çĕрулми чылай нумай туса илмелле. Колхозсен ĕç вăйĕн пĕр пайĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре кайнă май, кăçалхи çул ялхуçалăх ĕçĕсене, уйрăмăнах çуракине, ăнăçлăн ирттерессинче тракторсемпе ялхуçалăх машинисем пахăçаххи пек мар пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисем çителĕклĕ тата юсавлă пулнинчен çуракине вăхăтра тата чи кĕске срокра туса ирттересси килет. Мĕнтери иртерех, мĕнтери кĕске срокра туса хăваратăн, тырпул тухăçлăхĕ çавăн чухлĕ пысăкрах. «Пĕр кун кайран акан, эрне кайран вырăн», тенĕ халăх хăйĕн ĕмĕрхи халапĕнче.

Республикăри чылай колхозсемпе МТС-сем тата вĕсен руководителĕсем çакна асра тытса тракторсемпе ялхуçалăх машинисене кĕркуннех типтерлĕн сарайсене пуха-пуха лартрĕç, юсавлă ма рисене шута илсе тахçанах юсама тытăнчĕç. Вăрнар МТС январĕн 20-мĕш тĕлне 34 трактор юсанă. Халь юлашки 7 трактора юсаса пĕтерессĕ. МТС директорĕ Осипов, старший механик Ремизов юлташсем трактор пайĕсем çук тесе тăстан аякран такаи илсе килессе кĕтсе лармарĕç. Вĕсене, тракторсен çĕтмен пайĕсене, вĕсем хăйсен мастерскойĕнчех туса кăларнă, çĕнетмеллисене çĕнетнĕ. Халĕ вĕсен тракторĕсем те юсавлă, çав вăхăтрах 3 пин тенкĕ таран укçа перекетлесе хăварнă.

Çуракине лайăх хатĕрленекен МТС-сенчен Чкаловски тата Ишлей МТС-сене палăртмалла. Тракторсем юсас плана Чкаловски МТС январĕн 20-мĕш тĕлне 85 процент, Ишлей МТС 76 процент тултарнă. Кувакино, Пăрачкав тата Элĕк МТС-сем те хăйсен тракторĕсене çуракине тухма тимлесех хатĕрлеççĕ.

Çавăн пекех колхозсем те чылай çĕрте хăйсен ялхуçалăх машинисене кĕркуннех сарайсене йĕркеллĕн пухса хăварчĕç, çĕмрĕкисене юсарĕç, юсаса пĕтерейменнисене халĕ тимлĕн юсаççĕ. Çапла ĕçлерĕ Калинински районри «Новый путь» колхоз. Колхоза П. Ситов коммунист ертсе пырать. Унăн колхозĕ иртнĕ çулти ялхуçалăх ĕçĕсене кĕркуннех ăнăçлăн вĕçлесе, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тĕштырă валеçсе пачĕ. Ситов юлташ колхоз ĕçне вăхăтра туса пыма пултарни тата çавтери пысăк тухăçлă тырпул туса илни колхоз ялхуçалăх машинисемпе çителĕклĕн усă курнинчен те килнĕ. Яланхи пекех, кăçал та Ситов колхозĕн пĕтĕм ялхуçалăх машинисене кĕркунне ĕçсем пĕтерсенех юсама тытăнчĕ. Халĕ унăн машинисем пурте юсавлă.

Кунашкал тĕслĕхсем пирĕн республикăра сахал мар. Чылай колхозсем хăйсен ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене хатĕрлесе çитерчĕç те ĕнтĕ. Анчах нумай колхозсемпе МТС-сем çак чыслă ĕçе ку вăхăта çитсе те чăнласа тытăнман-ха, хăшпĕр колхозсемпе МТС-сенче вара вăл ĕç ытла та япăх. Çĕрĕç халăх комиссариачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Красноармейски МТС юсамалли 42 тракторта январĕн 20-мĕш тĕлне пĕрине те юсаман. Хăшпĕр тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисем нумайĕшĕсем бригадăсенче юр айĕнчех лараççĕ. Çавнашкалах Çĕрпÿ МТС-че те тракторсене çуракине хатĕрлес ĕç тивĕçлипе пулса пымасть. МТС-ăн кăçал 46 трактор юсамалла пулнă, халĕ вĕсем 14 трактор çеç юсанă. Кунта та, Красноармейски МТС-ри пекех, тракторсем юсамалли мастерской питĕрĕнсе ларать, тракторсемпе ĕçлемелли ялхуçалăх машинисене халĕ те бригадăсенчен илсе килмен.

Красноармейски МТС директорĕ Лукин юлташпа Çĕрпÿ МТС директорĕ Баранов юлташ мĕне кĕтеççĕ-ха? Ăнланма йывăр.

Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Первомайски тата ытти чылай МТС-сем те хăйсен тракторĕсене, Красноармейскипе Çĕрпÿ МТС-сем пек, «ăнланмалла мар» ремонтлаççĕ. Пĕтĕм республикипе илсен, тракторсем юсас плана январĕн 20-мĕш тĕлне пурĕ те 53 процент çеç тултарнă.

Колхозсенче ялхуçалăх машинисене юсасси те пачах çителĕксĕр пырать. Ку ĕç республикăра мĕнле пулса пыни çинчен Çĕрĕç халăх комиссариачĕ паянлăха нимĕн те каласа пама пултараймасть-ха, вăл хăй те ку тĕлĕшпе çак кунсенче тин хускалчĕ. Районсенчи нумай колхозсенче ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман-ха. Сăмахран, Советски райçĕрпайĕнчен килнĕ сведенисем тăрăх, районра ку вăхăта çитсе пĕр колхоз та пĕр плуг та юсаман. Красноармейски районра юсамалли 1.500 плугран январĕн 20-мĕшĕ тĕлне 43 плуг юсанă. Культиваторсемпе ытти ялхуçалăх машинисене кунта та юсама тытăнман. Элĕк районĕнчи Асамат тата Татмăш колхозĕсен триерĕсем, сеялкисем халĕ те юр айĕнчех лараççĕ. Çакнашкал тĕслĕхсем кашни районрах тупма пулать.

Çураки кунсеренех çывхарса килет. Кашни колхозăн, кашни МТС-ăн хăйĕн тракторĕсемпе ялхуçалăх машинисене тата транспорт хатĕрĕсене халех юсама тытăнмалла. ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ тракторсемпе ялхуçалăх машинисене МТС-сенче апрелĕн 1-мĕш тĕлне, колхозсенче апрелĕн 10-мĕш тĕлне пĕтĕмпех юсаса çитерме хушса хăварчĕç.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçĕн хăвăртлăхне темиçе хут ÿстерни кирлĕ. Пĕр трактор та, пĕр ялхуçалăх машини те юсанмасăр ан юлтăр, вĕсен пахалăхĕ лайăх пултăр, вĕсем çирĕп пулччăр. Вара эпир кăçалхи çуракине те ăнăçуллăн ирттерĕпĕр.

Поездсене йĕркеллĕ çÿретессишĕн

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Чугунçул станцинче ĕçлекенсем хушшинче Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнине кĕтсе илес ятпа социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Дежурнăйсемпе стрелочниксем тата лини çинчи рабочисем Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнине поездсене пĕр чăрмавсăр, простой тумасăр çÿретнипе, чугунçул линине отлично тытнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Илнĕ обязательствăна пурнăçлас тĕлĕшпе коллективра пример кăтартса ĕçлекенсем сахал мар. Сăмахран, станци дежурнăйĕ Зубавин юлташ ĕçре пĕр брак та, пĕр простой та тумасть, вăл кашни поездах вăхăтра кĕтсе илсе, вăхăтра ăсатать.

Стрелочница Смирнова юлташ та хăйне шанса панă участокри ĕçе лайăх туса пырать. Унăн участокĕнчи стрелка хуçалăхĕ яланах йĕркеллĕ, стрелкăсене вăл яланах таса та тирпейлĕ тытать.

Мыслец разъезчĕн коллективĕ те Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнине пысăк çитĕнÿсем тунипе паллă тума хатĕрленет. Кашни рабочи кунта пĕр браксăр, пĕр простойсăр ĕçлеме обязательство илнĕ. Чылайĕшĕсем хăйсен обязательствисене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Стрелочница Мария Минеева юлташ юлашки вăхăтра пĕр браксăр ĕçлет, стрелка хуçалăхне отлично тытать.

Коммунист Иван Петренко 4-мĕш дистанцин 17-мĕш участокĕнче бригадир пулса ĕçлет. Унăн бригадинче 20 çын. Пурте вĕсем хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пыраççĕ. Бригада çула яланах таса тытать. Старший ремонтнăй рабочи Алексеев, обходчик Самойлов тата Ефимовпа Климкина юлташсем уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем иртнĕ çулта та хăйсен ĕçĕнче пĕр брак та, пĕр простой та туман. Кирек мĕнле ĕçе те, кирек хăш вăхăтра тума хушсан та, вĕсем вăхăта пĕр минута сая ямасăр, васкасах пурнăçлама тытăнаççĕ.

Х. ЛИСИН.

Малта пыракан çамрăксене — комсомол ретне

ЕЛЧĔК. Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа районри малта пыракан чылай çамрăксем Ленинла-Сталинла комсомол ретне кĕчĕç. Нумаях пулмасть «Красное знамя» колхозри пуçламăшри организацинче В. Шашкова, Н. Кузьмин юлташсене комсомола илчĕç. Вĕсем — допризывниксем, часах Хĕрлĕ Çара кайма тивĕçлĕ примерлă çамрăксем. Хăйсен хастарлă ĕçĕпе комсомола кĕме тивĕçлĕ пулчĕç.

Н. СУХАРЕВСКИЙ.

Культсбор укçине пухаççĕ

ÇĔРПУ. Районри налог агенчĕсем укçа-тенкĕ пухас плана срокчен тултарассишĕн пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Малта пыракан налог агенчĕсем социализмлă ăмăртăва хутшăнса укçа-тенкĕ парăмĕсене пухма пуçларĕç. Чурачăк ялсоветĕнчи налог агенчĕ Петров юлташ культсбор укçине 2.717 тенкĕ, Паваркасси ялсоветĕнчи налог агенчĕ Тихонов юлташ 1.579 тенкĕ пухрĕç те ĕнтĕ.

Çавăн пекех Леонтьева (Тавăшкасси ялсовечĕ), Михайлова (Тивĕш ялсовечĕ) т. ыт. агентсем те культсбор укçине 10... пер тенкĕ ытла пухнă.

Г. П.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 26-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малалла куçса пынă. Вăйлă çапăçусем хыççăн пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, çав çапăçусенче противник пысăк çухатусем тÿснĕ.

Январĕн 25-мĕшĕнче нимĕçсен 20 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 26-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 4 самолетне персе антарнă.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн подводнăй лодка противникăн 2 транспортне тата хуралра çÿрекен пĕр карапне путарнă.

* * *

Январĕн 25-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 14 танкне, пехота тата грузсем турттарса пыракан 450 автомашинине яхăн, боеприпассем тиенĕ 120 лавне тата 5 полевой орудине пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 20 вагона тата 2 паровоза сирпĕнтерсе янă, противник пехотин 4 батальонне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ эрне хушшинче, январĕн 18-мĕшĕпе 24-мĕш хушшинче, нимĕçсен авиацийĕ 126 самолет çухатнă. Вĕсенчен 78 самолетне сывлăшри çапăçусенче, 14 самолетне зенитнăй тупăсенчен персе, 34 самолетне противникăн аэродромĕсем çинче пĕтерсе тăкнă. Çак вăхăт хушшинче пирĕн 41 самолет пĕтнĕ.

* * *

Бобров юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) противник войскисен пĕр ушкăнĕн каялла чакмалли çулне пÿлсе лартнă та, хаяррăн çапăçса, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна вĕлернĕ, тăшманăн 16 орудине, 27 пулеметне, боеприпассем тиенĕ 76 лавне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче старший лейтенант Шепунов командир пулса ертсе пыракан пирĕн отряд, тăшман батальонĕн контратакине сирсе пăрахса, нимĕçсен 2 танкне, 2 полковой минометне тата 5 пулеметне тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн танковăй часть, икĕ кун хушши çапăçса, халăх пурăнакан 8 пункта тытса илсе ирĕке кăларнă, чугунçул çинчи тĕрлĕ грузсем тиенĕ 2 эшелона, боеприпассем тиенĕ 30 автомашинăна тытса илнĕ тата гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна стройран кăларнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр часть, противника хирĕç виçĕ кун хушши çапăçса, тăшман пулемечĕсен 11 точкине, 9 минометне тата артиллерин 12 батарейине пĕтерсе тăкнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 700 çынна яхăн пĕтнĕ.

* * *

Рябухин лейтенант красноармеецсен пĕр ушкăнĕпе пĕрле Р. ялне пырса кĕнĕ те, нимĕçсен чаçĕн штабĕ çине гранатăсем ывăтса, тăшманăн 32 офицерне вĕлернĕ.

* * *

Партизансен тăватă отрячĕ, Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ территорийĕнче кĕрешекенскерсем, юлашки икĕ уйăх хушшинче нимĕçсен 1 самолетне, 2 танкне, 75 автомашинине, 20 мотоциклне, 2 зенитнăй орудине тата пĕр радиостанцине пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем çав вăхăт хушшинчех боеприпассен 5 складне, чугунçул çинчи 7 кĕпере сирпĕнтерсе янă, войскăсем турттарса пыракан 23 эшелона тÿнтерсе янă тата гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсене 436 çынна вĕлернĕ.

* * *

Нимĕç салтакĕн Гейнц Кюлĕн кăсъинче Лейпцигра пурăнакан Рольф Егер патне яма ĕлкĕрейменн çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Эпир хамăрăн пуçа çиме кайрăмăр. Пирĕн ротăри çынсенчен тăваттăмĕш пайĕ çеç сыхланса юлчĕ. 180 çын пулнăччĕ, 45 çын çеç тăрса юлчĕ».

* * *

Гитлерла пуçкасакансем хăйсен бандитла ĕçĕсен списокне тата тепĕр чăтма çук йывăр преступлени çырса хучĕç. Вĕсем Литвинов доктор ячĕпе тăракан психиатрически больницăна, Калинин облаçĕн Калинин районĕнчи Бурашево ялĕнче тăраканскере, юхăнтарса çĕмĕрсе тăкнă тата унта выртакан чирлĕ çынсене асаплантарса, вĕлерсе пĕтернĕ. Гитлеровецсен çак çĕнĕрен тунă усал ĕçне тĕплĕн йĕрлесе пĕлмешкĕн Мускавран авторитетлă комисси янăччĕ. Кунта çав комиссии актне пичетлетпĕр.

«АКТ

Эпир, аяла алă пуснăскерсем, Литвинов доктор ячĕпе тăракан психиатрически больницăна тĕплĕн пăхса тухрăмăр та çакна палăртрăмăр: нимĕçсен войскисем çак больницăн территорине 1941 çулти ноябрĕн 15-мĕшĕнче оккупациленĕ. Çав вăхăт тĕлне больницăра 530 чирлĕ çын выртнă. Нимĕç захватчикĕсем малтанхи кунах больницăн продовольстви запасĕсене тĕппипех çаратса тухнă, çапла туса вĕсем чирлĕ çынсене выçă вилĕмпе вилмелле туса хунă. Гитлеровецсем больницăра ĕçлекенсене çийĕнчех больницăн темиçе корпусне пушатма хушнă. Унтан, çапла хушнине пурнăçа кĕртессине кĕтсе тămасăрах, бандитсем палатăсене çĕмĕрсе кĕнĕ те çÿреме пултарайман чирлĕ çынсене койкăсем çинчен тĕрте-тĕрте антарнă. Чирлисене нумайĕшне нимĕç варварĕсем палатăсенчех штыксемпе чиксе тата персе вĕлернĕ. Çав корпуссенче выртса пурăннă 80 чирлĕ çынна Бреднево ялне илсе кайса больницăн унти хушма-хуçалăхĕнче вырнаçтарма май килнĕ. Анчах тепĕр кунне гитлеровецсем çавăнта пынă та чирлĕ çынсене пурне те персе пăрахнă. Унтан гитлеровецсем татах çĕнĕрен усал ĕçсем тунă. Вĕсем чирлĕ çынсене наркăмăшлă эмелсем (морфий, скополамин, веронол, амитал) вĕлермелле чухлĕ парса, вĕсене темиçе кун хушшинче вĕлерсе пĕтернĕ.

Чирлĕ çынсене çапла вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн пушаннă пĕр çуртра нимĕçсем офицерсем валли столовăй тунă. Больницăн ытти çурчĕсене вĕсем вителсем туса хунă. Каялла чакас умĕн нимĕç вандалĕсем больницăн сывалмалли татах 5 корпусне (чирлĕ çынсем выртмалли 3 отделенине, лазарета тата физиолечебницăна), ача яслине тата пурăнакан 6 çурта взрыв туса сирпĕнтерсе янă.

Хăйсене хÿтĕлеме тата нимĕн тума пултарайман чирлĕ çынсене массăллăн вĕлерсе тухни тата çынсене сыватмалли учреждение çĕмĕрни вандализмăн халиччен пулман тĕслĕхĕ пулса тăрать. Гитлеровецсен пуçкасаканĕсем тунă çав калама çук хаяр преступленисем çинчен эпир пĕтĕм тĕнчене пĕлтерме кирлĕ тесе шутлатпăр. Çакăнпа пĕрлех эпир ирсĕр тăшманăн çак пысăкран та пысăк преступленийĕсем каялла тавăрмасăр юлмĕç тесе хытă шанса тăратпăр. Гитлерла çынвĕлеренсемпе пуçкасакансене тивĕçлипе тавăрĕç.

Мускав хулин психиатрĕ доктор **И. С. Иолович**, Кащенко ячĕпе тăракан психиатрически больницăн главнăй врачĕ **В. А. Тверитин**, доктор **П. Ф. Обновленский**, профессор **А. М. Вершинский**, профессор **В. М. Брадис**, доктор **А. Н. Абрамов**, доктор **Н. А. Федосеев**».

Январĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле совет войскисем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç малалла наступлени туса пынă.

* * *

Прокофьев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ тата нимĕçсенне 10 оруди, 15 пулемет, 600 снаряд, 15.000 патрон тытса илнĕ. Тепĕр участокра Чубарево ялĕшĕн çапăçнă чухне Кулешов юлташăн чаçĕ 7 пулемет, 190 винтовка, 40.000 ытла патрон тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын вилсе юлнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче халăх пурăнакан К. пунктра пирĕн боецсем противника поражени кÿнĕ. Нимĕçсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çухатнă. Тепĕр участокра нимĕçсен 516-мĕш пехотнăй полкĕн 2-мĕш батальонне пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсен 457-мĕш тата 516-мĕш пехотнăй полкĕсен ялавĕсене тытса илнĕ. К. районĕнче пулнă хаяр çапăçура противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1.040 çын вилнĕ.

* * *

С. ялĕ патне пымалли вырăнсенче противник пирĕн наступлени туса пыракан боецсене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Çакна шута илсе, политрук заместителĕ Никифоров юлташ хăйĕн пулемечĕпе малалла шуса тухнă та тăшман пулемечĕн расчетне тĕл персе пĕтерсе тăкнă, ял патне пымалли çула шÿлсе тăракан нимĕçсен 60 автоматчикне сапаласа янă.

* * *

Красноармеец-йĕлтĕрçĕсем Кабисов, Максимов тата Толстов юлташсем тăшманăн ялтан тухса таракан лавĕсем çине засадăран персе тăнă. Лавсене хÿтĕлесе пыракан нимĕçсен 18 салтакĕ тыткăна парăннă. Хăюллă боецсем оруди, пулемет, 30 винтовка тата нимĕçсен çаратса пухнă пурлăха тиенĕ темиçе лавне тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 7-мĕш дивизийĕнчи 62-мĕш пехотнăй полкран тыткăна лекнĕ салтак Рудольф Лацельсбергер çапла каласа панă: «Пире Мюнхенран 7-мĕш дивизин йышне ÿстерес майпа ячĕç. Эшелонра 350 çын пулчĕ. Эпир Малоярославец патне çитсен, пире темĕнле офицер чарчĕ те çапла каларĕ: «Вырăссем тапăнса килеççĕ. Çавăнпа та сирĕн кунтах юлас пулать, вырăссен атакине сирсе яма пулăшас пулать», терĕ. Пире малти лини патне ячĕç. Унта ним йĕрки те çукчĕ. Пур чаçсем те тата пур дивизисем те пăтранса кайнă. Вырăссем вăйлăнрах хĕсме тытăнсан, пирĕн салтаксем тарма тытăнчĕç, эпĕ тата ман юлташ кая тăрса юлтăмăр та тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Нимĕç ефрейторĕ Отмар Меттерних çумĕнче вăл киле ярса ĕлкĕреймен çакăн пек содержанилĕ çыру тупнă: «Турăшăн та, сире кинора мĕн кăтартнине ан ĕненĕр. Кинохроника вăл — пĕтĕмпех ултав. Кинора сире, сăмахран, салтаксем валли фронта тиртен çĕленĕ жилеткăсем нумай янă пек туса кăтартаççĕ. Çакă вăл пĕтĕмпех суя. Эпир вĕсене илмен тата курман та».

* * *

Нимĕçсен Францире вырнаçса тăракан чаçĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта кайма приказ панă. Çак приказа илсен нимĕç салтакĕсем тарăхса кайса протестлеме тытăннă. Эшелонсене кăларса ярас ĕçе чарас тесе, салтаксем чугунçул линийĕ çине грузовой машинăсем тăратса тухнă. Пырса çитнĕ карательнăй отряд нумайăшне арестленĕ. Арестленĕ салтаксенчен пĕр пайне çавăнтах персе пăрахнă.

* * *

Нимĕç оккупанчĕсенчен хăтарса ирĕке кăларнă совет районĕсенчи çамрăксем гитлерла бандитсем çĕмĕрсе пĕтернĕ хуласемпе ялсен хуçалăхне ура çине тăратас тĕлĕшпе паттăррăн ĕçлеççĕ. Калининри чугунçул деповĕнчи çамрăксем депона тасатас тĕлĕшпе ĕçленĕ, унта нимĕçсем вите тунă пулнă. Çак çамрăксем хĕçпăшал юсама кирлĕ инструментсене туса хатĕрлеççĕ. Минометсем юсамалли мастерской пĕтĕмĕшпех юсаса çитерне. Калининри Н-ски заводри çамрăксем оборудованисене пухса юсама тытăннă, вĕсем завод килкартишне тасатаççĕ. Юров партизанăн бригади нумай вольтлă линие юсаса ĕçе ярас тĕлĕшпе ĕçлет. Заволжски районра çамрăксем трамвай çулĕсене тасатаççĕ тата юсаççĕ. Торф кăлармалли вырăна каякан чугунçул юппин 5 километр тăршшĕ линине çамрăксен вăйĕпе юртан тасатса йĕркене кĕртнĕ. Мускав облаçĕнчи Солнечногорскра çамрăксем больницăна, пекарньăна, мунчана тата библиотекăна юсаса ĕçе яма тытăннă. Çамрăк связист Якушев юлташ темиçе кун хушшинче 300 радиоточкăна юсаса ĕçе янă. Чечнева тата Долбинина хĕрачасем çĕвĕ çĕлемелли 20 машина пухнă та çĕвĕ çĕлекен мастерской йĕркелесе ĕçе янă, вăл мастерской халĕ Хĕрлĕ Çар валли пумтирсем çĕлесе хатĕрлет.

Англи хĕрарăмĕсем совет профсоюзĕсен делегацийĕн членĕсемпе тĕлпулни

ЛОНДОН, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Лондонра совет профсоюзĕсен делегацийĕн членĕсем Англи хĕрарăмĕсемпе тĕлпулса каласнă. Англи работницисен, медицина сестрисен, килхуçи хĕрарăмĕсен тата граждăнла оборонăри хĕрарăмсен представителĕсем совет профсоюзĕсен представителĕсене Николаевăпа Малькова юлташсене саламланă тата хăйсем совет хĕрарăмĕсемпе пĕр шухăш-кăмăллă пулни çинчен каласа панă.

Митингра Малькова юлташ: Германи çарĕ питĕ пысăк çухатусем тÿсрĕ, анчах та ку пуçламăш çеç-ха, тесе каланă.

Совет Союзĕнче пур ĕç те çĕнтерÿшĕн пулса пынине кăтартса, Малькова юлташ çапла каланă: «Англири хĕрарăмсем пĕтĕм тĕнче илтĕнмелле эпир юнлă гитлеризма хирĕç пĕрлĕх фрончĕ тăватпăр тесе калаччăр. Противника çĕнтеретпĕр, çĕнтерÿ пирĕн алăра пулать», тенĕ.

Николаева юлташ хăйĕн сăмахĕнче совет хĕрарăмĕсен геройла ĕçĕсем çинчен каланă. Юлашкинчен вăл çапла пĕлтернĕ: «Эпир тăрăшни мирлĕ вăхăтра та, вăрçă вăхăтĕнче те ÿсех пымалла. Гитлер пĕтетех. Çĕнтерÿ сывă пултăр!»

Çĕнтерÿ тăвассишĕн нимĕнле жертвăсем умĕнче те чарăнса тăмалла мар тесе обязательство йышăннă хыççăн митинг хупăннă.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен ютçĕршывсенчи хаçат-журналсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Америкăра тухса тăракан хаçатсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен халĕ те нумай çыраççĕ. «Нью-Йорк пост» хаçат çапла çырать: Гитлер Можайск хулине Мускава хирĕç операцисем туса пымалли опорнăй пункт вырăнне шутласа, ăна хăйĕн аллинче тытса тăрасшăн пулнă. Анчах та вăл Хĕрлĕ Çарăн пырса çапас хăватне çителĕклĕ хак паман.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн вăрçă ĕçĕсен обозревателĕ хăйĕн радио тăрăх тухса каланă сăмахĕнче çапла каланă: Можайск патĕнче çĕнтернин пĕлтерĕшĕ пысăк, мĕншĕн тесен çав çĕнтерĕве Хĕрлĕ Çар Германи çарĕ вăйлăн хирĕç тăрса çапăçнине пăхмасăрах тунă.

Нью-Йоркра испанецсен чĕлхипе тухса тăракан «Премза» хаçат çапла çырать: Гитлер Германи çарне катастрофăран çăлса хăварма пултараймасть. Германи çарĕн верховнăй главнокомандующин Браухичăн вырăнне Гитлер хăй йышăннă хыççăн та Германи çарĕ каялла чакса пырать. «Браухичăн хăйĕн Ростовĕ пулнă пулсассăн, Гитлерăн халь ĕнтĕ хăйĕн Можайскĕ пулса тăчĕ», тесе çырать хаçат.

Юнайтед пресс агентствин вăрçă ĕçĕсен обозревателĕ Киммль Германи войскисен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи лару-тăрупе Наполеон çарĕн лару-тăрăвĕпе танлаштарть. «Истори тепĕр хут çаврăнса килсе çавăн пекех пулса пырать пулмалла, — тесе çырать Киммль. — Германи çарĕн лару-тăрăвĕпе Наполеон çарĕн лару-тăрăвĕ пĕр-пĕринчен çакăнпа уйăрăлса тăраççĕ: вырăссем 1942 çулта лару-тăрăва, хăйсен 1812 çулти аслашшĕсем пек мар, урăхла — хăйсен столицине çухатмасăрах хăйсем майлă улăштарса хучĕç. Нимĕçсем Смоленскалла, Наполеон чакса пынă çулпах, каялла чакса пыраççĕ». Киммль çакна палăртать: вырăссем нимĕçсене ахаль чакассинчен ытларах чактараççĕ; вĕсем противникăн чылай пысăк вăйĕсене каялла çавăрса ячĕç.

Протестантла чиркÿн паллă деятелĕ Брюс, «Пĕрлешнĕ чиркÿн» Канадăри организацийĕн членĕ пулса тăраканскер, (çав организацире 2 миллион çын ытла членра тăраççĕ) «Стар» хаçатра «Пирĕн Российăна тÿлемелли парăм» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Брюс унта — вырăссем çĕнтерни мĕн пур вăрçăсен историйĕнче чи чаплă та тĕлĕнмелле хăват пулса тăрать, тесе çырать. Вăл — вырăссен питĕ лайăх хĕçпăшал пур, вĕсен тактики çавтери аван, вĕсем калама çук пысăк хăюлăх кăтартаççĕ, тесе çырать.

«Российăн хăвачĕ ÿссе пырĕ, Германин хăвачĕ чакса пырĕ, тесе шухăшлама питĕ те вырăнлă. Вырăссем паттăррăн çапăçни вăрçăн ĕçе татса паракан факторĕ пулса тăрĕ».

Брюс Совет Союзне медицина енĕпе пулăшу пама чĕнет, «демократиллĕ çĕршывсем хăйсен хастарлă союзникне мĕн чухлĕ моральлĕ тата материальнăй пулăшу пама пултараççĕ, çав пулăшăва çавăн чухлех илме тивĕçлĕ аслă халăх умĕнче парăмлă пулса тăнине йышăнса» пулăшма чĕнет вăл.

СТАМБУЛ, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче тунă çитĕнÿсем çинчен каланă май, Джахад Ялчин «Хабер» хаçатра Италири радио нумаях пулмасть çапла каласа мухтаннине асаилет: Германи чаçĕсем «ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ», «Мускавăн ĕçĕ шанчăксăр» т. ыт. те тесе каланă пулнă радио. «Римри радио çапла каласа пĕлтернисем çинчен халь Италин радиокомментаторĕсем мĕн шухăшлаççĕ ши ĕнтĕ, çавă интереслă», — тет Ялчин. Берлин хăй çĕнтерессине тата Россия вăйсăрланассине хытă шанса тăнă, — тет Ялчин, — çакна нимĕçсем хăйсем çитес вăхăтрах çĕнтересси çинчен пĕтĕм тĕнче тăрăх кăшкăрса çÿрени кăтартса парать. Çавăн пек савăнăçлăн шанса тăнă хыççăн ĕмĕт çакăн пек татăлсан ĕнтĕ нимĕçсемпе итальянецсен шухăш-кăмăлĕсем мĕнле пулса тăнине пĕлме йывăр мар. Тата халĕ пурте çакна лайăх курса тăраççĕ ĕнтĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче сăмах хĕл пирки е ытти ăнсăртран килсе тухнă сăлтав пирки нимĕçсен наступленийĕ пăртаклăхă чарăнса тăни çинчен пымасть, (тĕнĕл çĕршывĕсен пропаганди çавăн пек каласа ĕнентерессшĕн). Ку вăл пропагандăна çавăн пек çăмăллăн ĕненекенсемшĕн йывăр урок пулса тăрать. Тĕнĕл держависен лару-тăрăвĕ питех те йывăр, — тесе çирĕплетет Ялчин.

Ирĕке кăларнă Торопец хулинче

Торопецран тухсанах çул вăрманлă сăрт çинелле чăнкăн улăхса каять. Ĕлĕк ку сăрт çинчен пăхсан, виçĕ кÿлĕ хĕррине вырнаçнă авалхи илемлĕ хула аллăмăн çинчи пек куранса ларатчĕ. Халĕ хула вырăнне çунса кăмрăкланнă çуртсен ишĕлчĕкĕсем çеç тискеррĕн курăнса выртаççĕ. 700 çул ытларах хăй вырăнĕнче ларнă çак хула çийĕн тĕпĕнле хăрушă тăвăл—вилĕм тăвăлĕ иртсе кайнă тейĕн. Авă лере хула урамĕсем айлăмалла тăсăлса анаççĕ. Кунта ĕлĕк йĕркипех тĕлĕнмелле ăстан чĕнтĕрлесе эрешленĕ йывăç çуртсем ларнă, вăл çуртсенче халăх пурăннă. Халĕ çав çуртсем вырăнне кăмрăкпа кĕл купи тата кăмака трубисем кăна тăрса юлнă. Авă лере нумаях та пулмасть çĕнĕ вăтам шкул ларнă. Халĕ ун вырăнĕнче çунса пĕтеймен вутпуççисем йăсăрланса выртаççĕ. Хулан мухтавне—культура çуртне—нимĕçсем ишĕлчĕк кăна туса хăварнă. Вырăс архитектурин чаплă памятникне, 16-мĕш ĕмĕртенпех сыхланса ларнă кивĕ собора, пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă.

Кунтан, çак сăрт çинчен пăхсан, çавсем илемлĕ хĕл çанталăкĕн ытамĕнче нимĕç захватчикĕсен тискер йĕрĕсем татах та хăрушăраххăн курăнса выртаççĕ.

Нимĕçсем Торопеца 5 уйăх каярах тытса илнĕ пулнă. Торопецра тăватă енчен сарлака шоссе çулĕсем килсе пĕрлешеççĕ. Çак центра нимĕçсем тÿрех хăйсен оборонин вăйлă тĕвви тума тытăннă. Вĕсем хула тавра тĕрлĕрен укреплениесем туса тултарнă, хула тулашĕнчи çуртсене пулеметсемпе автоматсем вырнаçтарса лартса, ДЗОТ-сем туса хунă. Вĕсем Торопец хулине темĕнле пулсан та хăйсен аллинчех тытса тăма шухăшланă. Анчах вĕсен ĕмĕчĕ пурнăçланаймарĕ: пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем, пур вăйĕсене пĕрлештерсе хăватлăн пыра-пыра çапса, тăшман оборонине çĕмĕрчĕç те хулана пырса кĕчĕç. Урам хушшисенче хаяр çапăçу пуçланса кайрĕ. Çак хаяр çапăçура хулана штурмлакан пирĕн войскăсене партизансем пысăк пулăшу пачĕç.

Торопец сыннисем вырăс халăхĕн историллĕ çапăçăвĕсене яланах активлăн хутшăннă. Торопец ополченецĕсем Александр Невский войскисемпе пĕрле нимĕçсене Чудски кÿллĕн пăрĕ çинче çапса аркатнă. Торопец хули сыннисем Стефан Баторийĕн Русь çине кĕпĕрленсе килекен войскисене хăваласа янă.

Торопец партизанĕсем—хăйсен аслашшĕсен мухтавлă ывăлĕсем. Хулари йывăç каскалакан заводри рабочисем, сывăхри ялсенчи колхозниксем, совет интеллигенцийĕ хăйсен тăван çĕршывне нимĕç ирсĕрĕсенчен тасатма красноармеецсене активлăн пулăшса пынă.

Пирĕн войскăсем наступлени пуçласа ярас умĕн партизансем нимĕçсен тылĕнче виçĕ пысăк кĕпере взрыв туса сирпĕнтерсе янă, нимĕç салтакĕсем патне тĕрлĕ снабжени турттарса пымалли çула татса илнĕ. Пирĕн чаçсем тăшманăн укреплени линийĕсене штурмлама тытăнсан, партизансем нимĕçсене тылран пырса çапнă. Урам хушшинче çапăçусем пынă чухне вĕсем красноармеецсене тăшманăн огневой точкисене тупса пĕтерсе тăкма пулăшнă, нимĕç автоматчикĕсене тĕл персе вĕлерсе пĕтерсе пынă.

Нимĕçсем Торопецран тармаллипех тухса тарнă. Вĕсем питĕ васканă, — пур тĕслĕхсем те çакăн çинчен каласа параççĕ: çурма арканчăк çуртсем, урам хушшине тăрса юлнă темĕн чухлĕ автомашинăсем. Шоферсем моторсене ĕçе яма та ĕлкĕреймен. Пĕр урамра юсавлă орудисемех темĕн чухлĕ тăрса юлнă. Вĕсенчен пĕри юр ăшне кĕрсе ларнă, ыттисем ун сывăхĕнче кĕпĕрленсе тăраççĕ. Çак орудисене нимĕçсем çаплипех пăрахса хăварнă. Вĕсем, хăвăртрах тарса ÿкесчĕ, хыçранах йĕрлесе килекен Хĕрлĕ Çар чаçĕсенчен хăвăртрах хăтăласчĕ, тесе çеç тăрăшнă.

Торопец çинче каллех хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Тăшман хулана пĕтĕмпех аркатса ишĕлтерсе пĕтернĕ. Анчах та вĕсен аркатăвĕсем мĕн чухлĕ ытларах, çавăн чухлĕ хаяртарах пулĕ пирĕн халăхăн нимĕç захватчикĕсене мĕн пур тискерлĕхсемпе ирсĕр ĕçсемшĕн ответ тыттармалли приговорĕ.

Б. ПОЛЕВОЙ.
(«Правда», январĕн 26-мĕш).

Тăшмана йĕрлесе

Ытти подразделенисемпе пĕрле эпĕ те хамăн ротăпа рубежа йышăнса çирĕплетрĕм. Ялта пытанса вырнаçнă çĕленшĕн вилĕм сехечĕсем сывхараççĕ. Эпир хĕсте пынипе тăшман, машинăсемпе хĕçпăшалсене хăйпе пĕрле илме ĕлкĕреймесĕр, ялтан тухса тарма тапаçланать.

Çук, ĕç тухмĕ! Ирĕклĕ совет ĕççынниенчен тискер кайăкла мăшкăлланакан тăшман пире хăйĕн юнĕпе тÿлĕ. Пĕр ял сывăхĕнче чылай вăхăт çапăçнă хыççăн тăшманăн юлашкийĕсене эпир ялăн кăнтăр пайĕнче çавăрса илтĕмĕр. Ялтан çĕлен-калтасене пĕтĕмпех тасатайман-ха. Чердаксем çине пытанса ларнă нимĕç салтакĕсем автоматсенчен пирĕн çинелле татти-сыпписĕр переççĕ. Халь ĕнтĕ ялта чĕрĕ юлнă нимĕçсене курма çук, анчах çунса пĕтеймен вăтам шкул умĕнче тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем тăраççĕ.

Пирĕн чаçсем Петровка ялне йышăнса илчĕç. Ялăн аслă урамĕпе тăшман виллисем тата пăрахса хăварнă автомашинăсемпе танксем яла тискер тĕс кĕртсе тăраççĕ. Нимĕç мерзавецĕсем ялта 26 кун хушши хăйсене хуçалла тыткалани çинчен колхозниксемпе колхозницăсем каласа параççĕ. Хăрушă, тискер ĕçсем тунă нимĕçсем Петровка ялĕнче. Пĕр сăмахпа каласан, шыв куркинчен пуçласа çуртйĕрсене çитиччен пĕтĕмпех ватнă, çĕмĕрнĕ. Ялта авалтан аватни тата выльăх-чĕрлĕх сасси сем илтĕнмеççĕ, пĕтĕмпех нимĕç йыттисем çисе янă. Сахал мар колхозниксене асаплантарса вĕлернĕ. Халь кунта фашист ордисем пысăк сиен кÿнĕ пулин те, ялта каллех çĕнĕ пурнăç пуçланать. Акă икĕ хутлă колхоз клубĕ. Кунта 4 сехет каярах çеç нимĕç çарĕн пыйтлă салтакĕсем вырнаçса тăнă пулнă, халь клуб çинче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет.

Клуб умĕнче сынçиенсем пĕр айăпсăр 3 арçынпа 2 хĕрарăма çакса вĕлернĕ, вĕсен виллисем юпа çинче 15 кун хушши çакăнса тăнă.

Кун хыççăн, эпир татах тепĕр яла йышăнса, нимĕçсене унтан хăваласа кăлартăмăр.

Çапла эпир виçĕ талăк хушшинче 7 яла фашистсенчен тасатрăмăр.

Лейтенант **С. ЕГОРОВ.**
Действующи арми.

Румынин тыткăна лекнĕ салтакĕсен пĕрремĕш конференцийĕ

Тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсенчен пĕринче январь уйăхĕнче Румынин Совет Союзне тыткăна лекнĕ салтакĕсен пĕрремĕш конференцийĕ пулса иртнĕ. Çав конференцире 876 делегат пулнă, вĕсем—Румыни халăхĕн пур сийĕсенчен те тухнăскерсем. Унта нефтяниксемпе ткачсем те, ремесленниксемпе служащисем те, çĕр ĕçлесе пурăнакансемпе батраксем те пулнă. Конференцире Румынири тĕрлĕ партисемпе тĕрлĕ политикăллă юхăмсем майлă тăракан çынсем тухса каланă.

Конференцире çакăн пек ыйтăва сÿтсе явнă: «Вăрçа часрах пĕтерес тесен тата Румыни халăхĕпе Румыни çарне çăлса хăварас тесен мĕн тумалла».

Доклада Дымовецки уездри Глоялĕнчи нефть промыслинче ĕçлекен механик Гею Георге туса панă. Георге тата Румыни халăхĕ патне ямалли декларацие, салтаксен пĕр пуçарулла ушкăнĕ сĕннĕскере, вуласа панă.

Конференцие совет тыткăнĕнчи нимĕçсен, венгерецсен тата финсен салтакĕсен представителĕсем пырса саламланă.

Пренисем пĕтсен декларацие сасăлама тытăннă. 876 делегат пурте декларацишĕн пĕр шухăшлă пулса сасăланă та ăна алă пуснă. (ТАСС).

Геббельс ÿпкелешни

СТОКГОЛЬМ, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). «Дас Рейх» хаçатра пичетленнĕ хăйĕн статьинче Геббельс вăрçăн икĕ çул çурă хушшинчи хăшпĕр итогĕсене пĕтĕçтерме хăтланнă. «Çав иртнĕ тапхăр, — тесе ÿпкелешет Геббельс, — пирĕн халăх хушшинче питех те тарăн йĕрсем хăварчĕ. Германи салтакĕсен вăрçăчченхи фотографийĕсем çине пăхсан тата вĕсене хальхи вăхăтра ÿкернĕ фотоÿкерчĕксемпе танлаштарсан, эпир салтаксен сăн-питĕнче тарăн пĕркеленчĕксем куратпăр». Нимĕçсен шухăш-кăмăлĕ пирки Геббельс уйрăмăнах шикленсе пăшăрханать. Нимĕç халăхĕн 1942 çулти шухăш-кăмăлĕсене Геббельс Германи халăхĕн 1917 çулти шухăш-кăмăлĕсемпе танлаштарать, нимĕçсене салхуллă та хуйхăллă шухăш-кăмăлсене парăнасран сыхланма чĕнет.

Нимĕç халăхĕн шухăш-кăмăлĕсене çирĕплетес шутпа Геббельс Германин противникĕсем саракан листовкăсене вуламалла мар, демократиллĕ державăсен руководителĕсен сăмахĕсене итлемелле мар тесе хушать тата кирек мĕнле йывăрлăха та тÿсее ирттермешкĕн хатĕр тăма чĕнет. Çавтери хаяр хĕл çинчен аса илтерсе, Геббельс нимĕçсене кăшт та пулин илĕртсе лăплантарас шутпа çапла калать: «Çитес майпа июнь уйăхĕсенче пирĕн халĕ январьпе февральте тÿсее ирттерме лекнĕ сивĕсенчен хăрамалла пулмĕ», тет вăл.

Хăйĕн юлашки статьинче татах Геббельс нимĕçсене, Германи çак вăрçăра поражени тÿсес пулсан, çавтери хăрушă малашлăх пулассипирки хăратать.

Америкăри „фактсемпе цифрăсен бюровĕн" директорĕн доклачĕ

ВАШИНГТОН, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Америкăри «фактсемпе цифрăсен бюровĕн» директорĕ Маклиш Рузвельт сĕнĕвĕ тăрăх, доклад пичетлесе кăларнă. Çав докладра Маклиш Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче хĕçпăшалпа боеприпассем тата ытти тĕрлĕ çар материалĕсем туса кăларасси татах та пысăкрах хăвăртлăхсемпе ÿссе пынине кăтартса парать. Çар самолечĕсем туса кăларасси питех те çÿлĕ виçене çĕкленчĕ, халĕ ĕнтĕ эпир Англипе пĕрле сывăх вăхăтсенчех самолетсем туса кăларас тĕлĕшпе тĕнĕл держависенчен иртсе каятпăр,—тенĕ докладра. Хĕçпăшал производствинче çичĕ миллион сынна çитекен çара пĕтĕмĕшпех хĕçпăшаллантармалăх хĕçпăшал туса кăларма палăртнă. 1941 çулта Америка çарĕн йышĕ пĕр миллион çурă çын шутланнă. Америка çарĕн регулярнăй чаçĕсем хальхи вăхăтра 34 дивизирен тăраççĕ, вăл шутра 27 пехотнăй дивизи, 5 бронетанковăй дивизи тата кавалерин 2 дивизийĕ. Çар министрĕ Стимсон çак кунсенче çапла пĕлтернĕ: çитес сывăх вăхăтрах „Америка çарне питех те вăйлăн ÿстерме палăртнă, тенĕ.

Çавăн пекех докладра танксем туса кăларас ĕç те пысăк хăвăртлăхсемпе ÿссе пыни çинчен каланă. 1942 çулта 45.000 танк туса кăларас задачăна пурнăçа кĕртни 60 бронетанковăй дивизие ытла çапăçу валли туллин хĕçпăшаллантарма май парать. Мĕнпур йышши орудисем туса кăларас ĕçе пилĕк хут ÿстернĕ, боеприпассем туса кăларасси вара пĕр çул хушшинче тăхăр хут ÿснĕ.

Тинĕс-çар строительствин программи пирки сăмах хускатса, Маклиш хăйĕн докладĕнче çапла кăтартса парать: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хальхи вăхăтра 15 линкор, 11 авианосец, 54 крейсер, 193 эсминец тата 73 подводнăй лодка тăваççĕ. Америкăн тинĕс-çар флотĕнче халĕ икĕ пине яхăн çĕнĕ самолетсем шутланаççĕ. Тинĕс-çар флочĕ хăйне валли çĕнĕ базăсем хăвăрттăн туса пырать. Америка правительстви çĕнĕрен 999 суту-илÿ парохочĕ тума заказ панă.

Çар промышленноçне çĕнĕрен 5 миллион рабочи явăçтарнă,—тесе пĕлтернĕ докладра. Çитес ултă уйăх хушшинче çар промышленноçне çĕнĕрен 5 миллион рабочи хутшăнмалла.

Хĕçпăшал кивçен е арендăна памалли закон тăрăх пулăшу парас программа мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине Маклиш тĕплĕн çутатса парать. Иртнĕ çулти март уйăхĕнче,—тенĕ Маклиш, — хĕçпăшал кивçен е арендăна памалли закон тăрăх тĕрлĕ çĕршывсене 18 миллион долларлăх пулăшу панă.

Докладра малалла Российăна, Голланди Индине, Австралие, Бирмăна, Китая, Африкăна, Çывăхри Хĕвелтухăçне, Британи утравĕсем çине, Кăнтăр Америкăна самолетсемпе танксем, орудисемпе боеприпассем тата продовольстви ытларах та ытларах ярса тăрасси çинчен каланă.

Çавăн пекех Маклиш хĕçпăшал кивçен е арендăна памалли закон тăрăх Российăна материалсем ярса тăрассине хăвăрттăн ÿстерме палăртнă, тесе кăтартса парать.

ПАН-АМЕРИКА КОНФЕРЕНЦИЙĔНЧЕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Рио-де Жанейро хулинче пыракан Пан-Америка конференцийĕ сÿтсе-явакан ыйтусенчен хальхи вăхăтра тĕп вырăнта тăраканни вăл — Америкăри государствăсем тĕнĕл держависемпе дипломатиллĕ çыхăнусем тытассине татас тĕлĕшпе резолюци йышăнасси пулса тăрать. Çав резолюцие йышăнма Колумби тата Уругвай делегачĕсем январĕн 16-мĕшĕнче сĕннĕ. Çак вăхăтчен Аргентинăпа Чили делегачĕсем тĕнĕл держависемпе дипломатиллĕ çыхăну тытассине татас ыйту пирки иккĕленсе тăнă. Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăпа Чили делегачĕсем халиччен тĕнĕл держависемпе (Германипе, Италипе, Японипе тата ыт. те) килĕшмеллерех резолюцисем йышăнассишĕн тăнă; вĕсем хăйсем енчен тĕнĕл держависен представителĕсене Латин Америкинче ирĕклĕн ĕçлеме чаракан мерăсем йышăнасси çинчен çеç сĕнÿ панă.

Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Пан-Америка конференцийĕн политика тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕ хальхи вăхăтра çакăн пек резолюци текстне пĕр шухăш-кăмăллă пулсах ырланă:

«**1-мĕш статья.** Америка тулашĕнчи государствăсем енчен Америкăри пĕр-пĕр государство çине тапăнасси пулсан, çавăн пек тапăнни Америкăн никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхне хăрушлăх умне тăратнă пирки, ăна мĕн пур Америкăри государствăсене хирĕç пыракан агрессиллĕ ĕç вырăнне шутламалла тесе йышăннă декларацие Америкăри республикăсем çĕнĕрен çирĕплетеççĕ.

2-мĕш статья. Хальхи агрессиллĕ ĕçсен влиянийĕ Америка çĕрĕнчен сирĕличчен, Америка çĕршывĕсене пĕр-пĕрне хÿтĕлесе тăмалла тăвас шутпа, пĕр-пĕрин хушшинче килĕштерсе пурăнма кирлине тата пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлеме кирлине Америка представителĕсем çĕнĕрен çирĕплетеççĕ.

3-мĕш статья. Америка çĕршывĕсен представителĕсем, харпăр-хăй çĕршывĕсенчи законсем тăрăх йышăннă правилăсене тытса пырса тата пĕтĕм тĕнчипе пыракан хальхи конфликт вăхăтĕнче кашни çĕршыв хăй йышăннă позицие тытса пырса, хăйĕн лару тăрăвĕсене кура, Японипе, Германипе тата Италипе дипломатиллĕ çыхăну тытассине татма сĕнеççĕ, мĕншĕн тесен çак асăннă государствăсенчен пĕрремĕшĕ Америка çĕршывĕ çине тапăнчĕ, ыттисем Америка çĕршывне хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтерчĕç.

4-мĕш статья. Юлашкинчен тата Америка республикисем çакна каласа хăвараççĕ: йышăннă решени Америка çĕршывĕсем пĕр шухăшлă пулнине çирĕплетсе патăр тесе, çакăн умĕнхи статьяра кăтартнă государствăсемпе çĕнĕрен çыхăну тытма пуçличчен малтан ку ыйтăва пĕр-пĕрин хушшинче канашласа татмалла».

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ВАШИНГТОН, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Америкăн çар министерствин коммюникинче çаксене кăтартса панă: январĕн 24-мĕшпе 25-мĕшĕнче Лусон утравĕ çинче (Филиппин) Япони войскисем Америкăпа Филиппин çарĕсен Батаан çурутравĕнчи позицийĕн сулахай флангне хытă хĕссе пынă. Кунти операцисенче Японин виçĕмкун çĕрле Субик заливĕнче тата Батаан çурутравĕн хĕвеланăç сыранĕнче антарнă войскисем çапăçнă. Тинĕс сыранĕсен тăрăхĕнче тата сăртсем урлă каçмалли вырăнсенче противник çине тăрсах шалалла сăрхăнса кĕни палăрнă. Япони войскисен атакисене çар карапĕсем çинчен артиллерирен пенипе тата авиаципе чарса тăнă, авиаци ĕçĕсене йывăр бомбардировщиксем те хутшăннă. Америкăпа Филиппин войскисен каялла чакма лекнĕ, çакăнпа пĕрлех Америка çарĕсен сылтăм флангĕ пысăк ăнăçуллă контратака тунă. Контратакăна полевой йывăр артиллери пулăшса тăнă. Çакна пула японецсен пехоти, пĕтĕмпех йĕркерен тухса, хăйĕн позицине пăрахса хăварнă, çапăçу уйхирне тăшманăн темиçе çĕр çын вилсе выртса юлнă тата материалĕсемпе хĕçпăшалĕсем нумай тăкăнса юлнă. Çавăн пек маневр тунипе Америкăпа Филиппин войскисен сулахай флангри ĕçĕсем лайăхланнă тата кунти лару-тăру та вăхăтлăха çирĕпленнĕ. Çапах та сывăх вăхăтсенчех японецсем хăйсен атакисене çĕнĕрен пуçласа ярасса кĕтмелле.

Ытти районсенчен нимĕнле пĕлтерÿ те илмен.

Тинĕс ĕçĕсен министерствин коммюникинче çакна кăтартса панă: Америкăн Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи эскадрин крейсерĕсемпе эсминецĕсем тăшманăн пилĕк транспортне путарнă, Америка флочĕ хăй енчен нимĕнле çухату та туман.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Англин Сингапурти командованийĕн коммюникинче ирхине Малайăн кăнтăрпа хĕвелтухăç сыранĕнчи Эндау районĕнче, Англи войскисем куçса кайнă вырăнта, Японин çар карапĕсем тата икĕ суту-илÿ парохочĕ пынине асăрханă. Мерсинг районĕнче Япони войскисем хăйсен активлăхне палăртман. Бату-Пахат хули районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн японецсем çак хулана йышăнса илнĕ.

Англи авиацийĕ иртнĕ каçхине противникăн тĕрлĕрен объекчĕсене темиçе хутчен те атакăланă. Бату-Пахат хулинчи çар объекчĕсене нумай çĕмĕрсе сиенленĕ. Унта пушарсем пуçланса кайнă. Куала-Лумпур хулинчи аэродрома ăнăçлăн атакăланă. Муар юханшывĕ çинче Япони парохочĕсем çине бомбăсем пăрахса пĕр парохода путарнă. Муартан кăнтăр енчи çул çинче японецсен транспорт колонни çине пулеметсенчен пенĕ. Англи самолечĕсем патрульре çÿреççĕ тата çав хушăрах Англин типсĕрти войскисене пулăшу парса тăраççĕ.

Паян ирхине Англи истребителĕсем Япони истребителĕсен соединенине атакăланă. Çапăçура противникăн пĕр истребительне персе антарнă.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 24-мĕшĕнче ирхине Япони войскисем Целебес утравĕн кăнтăр пайĕнчи Кендари районĕнче десант антарнă. Ку районра халĕ çапăçусем пыраççĕ. Японин январĕн 24-мĕшĕнче Кавиенга районĕнче (Çĕнĕ Ирланди утравĕ) антарнă десант çарĕн чаçĕсем январĕн 25-мĕшĕнче хула сывăхĕнчи района пĕтĕмпех йышăнса илнĕ.

Борнео утравĕ çинчи нефть кăларакан вырăнсене пăсса хăварни

НЬЮ ЙОРК, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Батавири корреспонденчĕ çакна пĕлтерет: унта илнĕ хыпарсем тăрăх, Голланди Индийĕн влаçĕсем, Борнео утравĕн хĕвелтухăç пайĕ патне Япони войскисем сывхарнине кура, Балик-Папан районĕнчи нефть кăларакан вырăнсене йăлтах пăсса хăварнă, кăларнă нефть запасĕсене пĕтерсе тăкнă. Нефть промыслине пăснипе тата хатĕрленĕ нефть запасĕсене пĕтернипе пулнă убытока 100 миллион долларлăх пулать, тесе шутлаççĕ.

Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Китайăн Кăнтăр Китайри войскисем юлашки кунсенче хăйсен ĕçĕсене Кантон районĕнче активлăн вăйлатса янă. Вăйлă çапăçусем хыççăн китаецсем Тамшуй хулине тытса илнĕ (ку хула Кантонпа Коулун чугунçулĕ çинче, Кантонран хĕвелтухăç енче ларать).

Хубэй провинцин хĕвеланăç пайĕнче Китай войскисем японецсен Даянран хĕвеланăç енчи тата Ичанран çурçĕрпе хĕвелтухăç енчи позицийĕсене атакăлаççĕ. Хэнань провинцинче Китай çарĕсем японецсене Синьян районĕнче хытă хĕсеççĕ.

Китайран илнĕ хыпарсем тăрăх, январĕн 24-мĕшĕнче Китай бомбардировщикĕсем японецсен Ханойри аэродромĕ çине çĕнĕрен пырса тапăннă. Китай самолечĕсем хăйсен базине пурте тĕрĕс таврăннă. **(ТАСС, январĕн 26-мĕш).**

Çĕрпÿ район Совечĕн сессийĕ

Çак кунсенче ĕççынни депутачĕсен Çĕрпÿ район Совечĕн черетлĕ сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесси тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарасси çинчен сÿтсе-яврĕ. Çак ыйтусем тăрăх сессире районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Башмаков юлташ доклад туса пачĕ.

Башмаков юлташăн докладĕнчен районри колхозсем иртнĕ çул уйхирти вăйлă тыррпула пухса кĕртес тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлесе пыни аван куранчĕ.

Районри малта пыракан колхозсем аслă çулпуç Сталин юлташ 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă хыççăн хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетрĕç. Пĕтĕм ĕçе вăрçă интересĕсене пăхăнтарса пыраç, «Вулкан», «Совет», «Нива», «Самолет», «Красный бригадир», «Прожектор», «Дружба» тата ытти хăшпĕр колхозсем те уйхирти вăйлă тыррпула чи кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕç. Çак колхозсем кĕлте турттарса авăн çапас тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе те лайăх ĕçлерĕç.

Пĕтĕмĕшпе илсен, районри колхозсем уйхирти вăйлă тыррпула вăхăтра вырса пуçтарчĕç. Анчах та кĕлте турттарса капана хывас, авăн çапас тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарас ĕçсем вăраха тăсăлса пычĕç. Январĕн 20-мĕш тĕлне районри 18 колхоз çеç авăн çапса пĕтернĕ. «Авангард», «Канаш», «Политотделец», «Камай», «Красный флот» тата Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсем ку тарана çитсе те уйхирти кĕлтесене турттарса капана хывса пĕтермен.

Çак колхозсем кая юлса пыни машинăсемпе туллин усă курманнинчен, ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухманнинчен, пĕр сăмахпа каласан, пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтĕнчи пек урăхлатса çĕнетменнинчен килет.

Районра пĕтĕмпе лаша вăйĕпе ĕçлемелли молотилкăсем 81, тракторпа ĕçлемелли молотилкăсем 14 шутланаççĕ. Машинăсемпе туллин усă курса ĕçлесен, вĕсем колхозсене пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Анчах та, калас пулать, машинăсемпе кирлĕ пек усă курни çук. Тĕслĕхрен, «Красный флот» колхоз 2 молотилка тытать. Апла пулин те колхоз авăна тăпачăпа çапать. Çапла вара кашни талăкра 100-шер центнер çапас вырăнне 2—3-шер центнер çеç çапса тасатать.

Машинно-тракторнăй станци, трактористсем çитмеççĕ тесе, молотилкăсене пурне те ĕçлеттермест. Çав хушăрах МТС дирекцийĕ 2—3 çул каярах трактор çинче ĕçленĕ çынсене каялла таврăрасси çинчен асăнать. Ун пек çынсем хулара та нумай. Сăмахран, Михайлова, Дрягункина, Дрезина, Илюхина, Дьяконова юлташсем иртнĕ çулсенче трактор çинче ĕçленĕ. Халĕ вĕсем урăх ĕçсене кусна.

Хĕрарăм колхозра пысăк вăй пулса тăрать. Хĕрарăмсене пурне те ĕçе явăçтарсан, вĕсем нумай ĕç тума пултараççĕ. Çуллахи вăхăтра хĕрарăмсене пурне те ĕçе явăçтарас шутпа чылай колхозсем ача яслисемпе площадкисем тата пĕрлешÿллĕ столовăйсем организацилерĕç. Анчах та тырă вырса пĕтернĕ хыççăн колхозсенчи ача яслисемпе площадкăсем, столовăйсем ĕçлеме чарăнчĕç. Çакă вăл хĕрарăмсене ĕçе явăçтарас тĕлĕшпе пысăк чăрмав пулса тăчĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ авăн çапнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен ятарласа постановлени йышăннăччĕ. Çав постановлени ĕç тухăçлăхне ÿстерме сахал мар пулăшать. Анчах та чылай колхозсенче ун çинчен каласа ăнлантарман. Хăшпĕр колхозсем ăна пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Сăмахран, «Красный флот» колхоз правленийĕ ĕçшĕн хушса тÿлеме ведомость тунă та лăпланса ларнă. Тырри не паянхи куна çитсе те колхозниксене валеççе паман.

Районри колхозсенче колхозниксен ĕçкунĕсене вăхăтра тата тĕрĕс шута илсе пыман тĕслĕхсем те сахал мар. Чурачăкри «Броневик» колхоз правленийĕ колхозниксен ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине 3 уйăх хушши çырса паман. Паллах ĕнтĕ, апла хăтланни вăл колхозниксен ĕçлес кăмăлне хуçни çеç пулать.

Кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕçсем кая юлса пыни государство умĕнчи обязательствăсене тултарас ĕçе те вăраха тăсса пырать. Январĕн 20-мĕш тĕлне государствăна тĕштырă, аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, техникăллă культурăсем т. ыт. те тăратмалли плансене район тултарман. Уйрăм колхозсем, сăмахран, «Богатырь», «Новая сила», «Красное знамя», «Шурăмпуç», «Стахановец», «Социалистический путь», «Броневик», «Красный флот» колхозсем паянхи куна тĕштырă тăратмалли плана 20—40 процент кăна пурнăçланă.

Ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕçре уйрăмăнах единоличниксем кая юлса пыраççĕ. Паянхи куна вĕсем çĕрулми тăратас плана 9 процент çеç пурнăçланă.

Государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарма майсем çителĕклĕ пулнă. Анчах та ку ĕç çине райсовет исполкомĕ те, уполнаркомзаг та, районри çĕрĕç пайĕ те кирлĕ пек çавăрăнса пăхман. Çавнашкалах хăшпĕр колхоз правленийĕсемпе ялсовет исполкомĕсем те ку енĕпе вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлемен. Çавна пула ĕнтĕ районри колхозсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн колхозниксене аванс шучĕпе тыррпул парасси çинчен йышăннă постановленине пăсма тытăннă. «Парижская Коммуна», «Кульмет», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем колхозниксене аванс шучĕпе закон кăтартса панинчен ытлашши тырă парса тултарнă. Çав хушăрах çак колхозсем государствăна тĕштырă вăхăтра парса татман.

Райсовет исполкомĕ колхозсем юлса пыни çинчен нумай каласнă, решенисем те йышăннă. Анчах та çав решенисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслемен, урăхла каласан, решенисене вĕçне çитермен.

Доклад тăрăх пынă прение 9 çын тухса каларĕ. Тухса калаçакансем райсовет исполкомĕн, районри çĕрĕç пайĕн, уполнаркомзагăн тата машинно-тракторнăй станцин ĕçĕсене хытă критиклерĕç. Уйрăмăнах райсовет исполкомĕн председателĕ Ф. Петров юлташ, массăран уйăрăлса кайса, хăй тĕллĕн ĕçлени çинче ытларах чарăнса тăчĕç. Чăнах та Петров юлташ исполком ларăвĕсене вăхăтра ирттермен. Райсоветăн сессине 8 уйăх хушшинче пĕрре те пухман.

Районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем колхозсенче час-часах пулаççĕ. Анчах та вĕсем колхозри çитменлĕхсене курмаççĕ, колхозсене кирлĕ пек пулăшма тăрăшмаççĕ.

Юлашкинчен Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Сомов юлташ тухса каларĕ. Сомов юлташ хăйĕн сăмахĕнче колхозсемпе ялсовет исполкомĕсенче ĕç дисциплини тивĕçлĕ вырăнта тăманнине палăртрĕ. Колхоз председателĕсем, ялсовет исполкомĕсене пĕлтермесĕрех, хăйсен ирĕкĕпе ăçта каяс килнĕ çавăнта тухса каяççĕ. Çавăн пекех ялсовет исполкомĕсен председателĕсем те райсовет исполкомне пĕлтермесĕрех тухса çÿреççĕ.

Сомов юлташ хăшпĕр колхоз председателĕсем общественнăй хуçалăха вăйлатассишĕн тăрăшманнине тĕслĕхсем илсе кăтартнă.

— Хăшпĕр колхоз председателĕсем фермăсенче эрни-эрнипех пулмаççĕ,— терĕ вăл. Çапла вара колхоз руководителĕсем фермăсенче выльăх-чĕрлĕхсене мĕнле пăхни çинчен нимĕн те пĕлмеççĕ.

Сомов юлташ ялсоветсене район центрĕнчен уполномоченнăйсем час-часах ярса ялсовет исполкомĕсен ролĕсене пĕчĕклетни çинчен те чарăнса тăчĕ.

Юлашкинчен Сомов юлташ район Совечĕн депутачĕсене йăнăшсене тÿрлетсе района малти рете кăларассишĕн кĕрешме чĕнчĕ.

Сесси райсовет исполкомĕн председательне Ф. Петров юлташа ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе пыма пултарайманшăн ĕçрен хăтарчĕ. Сесси райсовет исполкомĕн председателĕн ĕçĕсене туса пыма Чăваш АССР Верховный Совет депутатне Н. С. Хабаров юлташа суйларĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пропала лошадь в упряжке.
Приметы:—матка гнедой масти, на лбу звезда, 3 лет. Знающим сообщить по адресу: колхоз „Коминтерн", Ново-Урюмовского сельсовета Канашского района ЧАССР
ПРАВЛЕНИЕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. **ТЕЛЕФОНСЕМ:** редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ28

Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 1/4 п. л.